Газета «Çĕнтерӳ çулĕ» t.me/putpobedy21 Путь победыОК Путь Победы



# МЕДИА – пирĕн чунра

Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕн, информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин пулăшăвĕпе пичетленет. Авторĕ – Светлана Чикмякова



**Кĕçĕн Кипек шкулĕнче медиацентр кăçалтан ĕçлеме пуçланă. Вăл «Ералаш» ятлă. Ачасене информаци тĕнчипе Надежда Михайловна Чекушкина туслаштарать. Медиацентра çӳрекен ачасем çав тери хастар. Вĕсем шкулта иртекен кашни мероприятие хастар хутшăнаççĕ. Кашнинче фотосем ӳкереççĕ, заметкăсем çыраççĕ. Мĕнпур информацие вĕсем «ВКонтакте» социаллă сетьри страницăна вырнаçтараççĕ.**

**Паллашар-ха ачасен ĕçĕсемпе.**

## Пулăшу – чи лайăх парне



**Раççей Президенчĕн Владимир Путинăн çуралнă кунĕнче çĕршывĕпех ырăлăх акцийĕсем иртрĕç. Эпир те юлмарăмăр.**

Кĕçĕн Кипек шкулĕн активисчĕсем Туçи Мăратри шкулăн паркĕнчи çӳп-çапа тасатрĕç. Кунти йывăççене шкул 100 çул тултарнă ятпа лартнă. Ачасем парка йĕркелĕхре тытса тăрассине пысăк тӳпе хываççĕ.

7-мĕш класс хĕрачисем Дана Павловапа Маша Иванова ялти ватăсене кил хуçалăхĕнче пулăшрĕç: çулçăсене шăлса тасатрĕç, мунчана шыв йăтса пачĕç, ветеран-педагогсене саламлама та манмарĕç.

Ку класра вĕренекен Элина Чекушкина вара пĕр ялта пурăнакан çынна кишĕр кăларса пулăшнă.

Пулăшу, ырă ĕç – чи лайăх парне.

**Руслан АНДРЕЕВ, 9-мĕш класра вĕренекен**

## Кĕвĕ тĕнчи илемлĕ

**Музыка – çын шутласа тупнă чи тĕлĕнмелле изобретени. Вăл халăхăн культурипе йăлине кăтартать çеç мар, çын кăмăлне те çĕклет.**

Эпĕ музыкăна çав тери юрататăп. Тĕрлĕ жанрлă юрăсене килĕштеретĕп.

Мана атте-анне гитара та туянса пачĕ. Эпĕ ăна пушă вăхăт тупăнсанах алла илетĕп, кĕвĕсем калатăп.

Юлташсем те гитара итлеме кăмăллаççĕ. Нумаях пулмасть эпир çутçанталăк ытамĕнче çӳревре пултăмăр. Гитарăна унта та илтĕм. Пулă тытнă, шӳрпе пĕçернĕ хыççăн шурă хурăнсем айĕнче ун çеммипе юрларăмăр.



**Элина ЧЕКУШКИНА, 7-мĕш класра вĕренекен**

## Ырă хутшăнусем пĕлтерĕшлĕ

**Иртнĕ класс сехетĕнче çав тери пĕлтерĕшлĕ те кирлĕ темăна хускатрĕç – коллективлă хутшăнусем пирки. Пĕр-пĕринпе мĕнле туслашмалла? Ыттисен кулли-мăшкăлĕ пулса тăрас мар тесен мĕн тумалла? Тата хăвăн çынран тăрăхлассинчен мĕнле сыхланмалла?**

Эпир «коллектив», «команда» сăмахсем мĕне пĕлтернине, ушкăнра ăшă хутшăнусем пулни мĕн тери аванне пĕлтĕмĕр. Пĕр ачаран класĕпе тăрăхлани ытла та тискер пулнине ăнлантăмăр. Вăл конфликтран, хирĕçӳллĕ самантран та хăрушăрах иккен. Класпа çак тĕрĕсмарлăха мĕнле пĕтермеллине сӳтсе яврăмăр.



Çакна та астуса юлтăмăр. Енчен те ача ăнланусăрлăха лекет-тĕк, Ачапча шанăç телефонĕпе шăнкăравламалла. Ун номерĕ: 8-800-2000-122. Унта пысăк квалификациллĕ психологсем ĕçлеççĕ, вĕсем кирек мĕнле йывăр лару-тăруран та тухма пулăшаççĕ.

Хутшăнусене лайăхлатас тесе эпир пĕрлехи правилăсем те шутласа тупрăмăр. Çакă пирĕн туслăха тата та çирĕпрех тума пулăшĕ.

**Дана ПАВЛОВА, 7-мĕш класра вĕренекен**

## Ача садĕнче



**Çавалкасри «Çеçпĕл» ача садĕнче кăмăллă воспитательсем тимлеççĕ.**

Нумаях пулмасть эпир Мăн Явăшри шкул ачисемпе пĕрле унта хăнара пултăмăр. Воспитательсене, садик ĕçченĕсене ачасене пуçламăш пĕлӳ, воспитани илме пулăшнăшăн тав турăмăр.

**Настя ТРОФИМОВА, 8-мĕш класра вĕренекен**

## Хăнара – салтак

Кĕçĕн Кипек шкулĕнче çав тери хумхануллă тĕлпулу иртрĕ. Пирĕн патра хăнара ятарлă çар операцийĕн салтакĕ Евгений Лукин пулчĕ



**Евгений Сăкăтран, Туçи Мăрат шкулĕнчен вĕренсе тухнă. Вĕреннĕ вăхăтсене Евгений кăмăллăн аса илчĕ. Служба пирки каласа кăтартрĕ.**

Учительсем те, ачасем те салтака чылай ыйту пачĕç. Вăл службăра пĕлӳ те, ӳт-пӳ пиçĕхĕвĕ те пĕлтерĕшлĕ пулнине асăнчĕ. Çавăнпа та пире лайăх вĕренме, физкультурăпа туслашма, тутлăхлă апатланма сĕнчĕ.

Тĕлпулăва Евгенийĕн амăшĕ те, Эльвира Лукина, килнĕ. Вĕрентекенсем ăна паттăр ывăл çитĕнтернĕшĕн тав турĕç.

Евгений Лукин çуралнă вырăнта нумаях пулмасть, кĕçех служба вырăнне таврăнать. Ачасем ăна хăйсем ăсталанă талисмансене парнелерĕç, Çĕнтерӳпе таврăнма ăнăçу сунчĕç.

**Мария ИВАНОВА, 7-мĕш класра вĕренекен**

**Медиа – пирĕн чунра** Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕн, информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин пулăшăвĕпе пичетленет.

# Астăвăм хаклă



**Кĕçĕн Кипек шкулĕнче вĕренекенсем патриотла мероприятисене тăтăшах хутшăнаççĕ.**

Анчахрах вĕсем хамăрăн ентеш, Совет Союзĕн Геройĕ Алексей Иванович Иванов 100 çул тултарнă ятпа ун ячĕпе çуралнă Кив Сăрьел ялĕнче иртнĕ митинга хутшăнчĕç.

Алексей Иванов – çамрăк Герой. Тăван çĕршыв ирĕклĕхĕшĕн ун пурнăçĕ 1945 çултах татăлнă. Вăл 1-мĕш Белорусси фрончĕн 5-мĕш ударлă çарĕн йышĕнче тăнă, оруди наводчикĕ пулнă.

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин паттăрĕсене эпир нихăçан та манмастпăр. Вĕсем пек пулма тăрăшатпăр!

**Юлия ПЕТРОВА,**
**9-мĕш класра вĕренекен**

# Чунпа пуянлантăмăр



**Нумаях пулмасть эпир, 8-мĕш тата 9-мĕш классенче вĕренекенсем, районти культура çуртне К.В.Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх драма театрĕн «Чунăм Лиза-Акулина» спектаклне кайса куртăмăр.**

Ăна А.С.Пушкинăн «Барышня-крестьянка» произведенийĕ тăрăх лартнă. Актерсем выляни питĕ килĕшрĕ. Сăнарсене мĕнлерех хитре, чăн пулнă пек калăплаççĕ вĕт вĕсем! Рольсенче паллă артистсем кăна мар, çамрăксем те пур. Вĕсем пире спектаклĕн пĕрремĕш минутĕнченех тыткăнларĕç. Романтикăллă камите пĕрре сывланă пек пăхрăмăр. Вăл питĕ килĕшрĕ.

Киле кайнă чухне те сцена çинче курни пирки кăна калаçрăмăр. Спектакле «Пушкин карттипе» кĕтĕмĕр. Çакă та пĕлтерĕшлĕ. Проект илем тĕнчипе туслашма пулăшать-çке.

**Юлия ПЕТРОВА,**
**9-мĕш класра вĕренекен**

# Çĕнтерӳ волонтерĕсем

**Пирĕн шкулта та Çĕнтерӳ волонтерĕсем пур. Вĕсем тĕрлĕ мероприятисенче хастар.**

Акă, директорăн воспитани енĕпе ĕçлекен советникĕ Надежда Михайловна Чекушкина ертсе пынипе «Таса чӳречесем» акцие хутшăнчĕç. Туçи Çармăсра пурăнакан, нумай çул кĕçĕн классен учителĕнче тимленĕ Р.Г.Ивановăна чӳречесем çума пулăшрĕç. Арçын ачасем те, хĕрачасем те маттур пулнă. Кĕске вăхăтра кантăксем йăлтăртатма та тытăннă.

Р.Г.Иванова – типтерлĕ çын. Ун пур çĕрте те тасалăх хуçаланать. Анчах та ăна урам енчен чӳречесене хăпарса çума кансĕртерех. Çавăнпа та ачасен пулăшăвĕшĕн вăл питĕ хĕпĕртенĕ.

**Диана ДАНИЛОВА,**
**9-мĕш класра вĕренекен**

